П. Хусанкай

**Ирĕк ĕçпе пултарулăх телейĕ**

Нумаях пулмасть Ленинградри Эрмитажра пăлхар художникĕсен выставкине куртăм. Ун хыççăн тĕнчери искусствăна ăста пĕлекен пĕр çынна тĕл пултăм. Вăл хĕвеланăçĕнчи халăх демократи çĕршывĕнчен килнĕ-мĕн. Çав çĕр чăмăре тавра темиçе çаврăннă çынпа, тин çеç пăлхар выставкине курса тухнăскерпе, калаçса каймалла пулчĕ.

— Буржуаллă патшалăхсенче нимĕнле тӳре-шара та искусствăпа литературăна кунашкал ăшă кăмăлпа юпкурмасть, - терĕ манпа юнашар пыракан, тен, юлашки çулĕсене пурăнакан шап-шурă çӳçлĕ ватă çын. - Унта художник хăй пĕлнĕ пек пурăнать, вăл çав тери пĕччен. Выçă вилес темесессĕн, унăн час-часах пурăнса йăлăхнă тĕрлĕрен аскăнчăксене çыр-лахтарма тивет.

Эпир пăлхар выставки çинчен сăмах тапратрăмăр. Пысăк ăстасен халăх кун-çулĕнчен шăтса тухнă, чăн пурнăçа кăтартакан картинăсем пире пăх-тарнăçем пăхтарчĕç. Халăх хушшинче çитĕннĕ ятсăр-шывсăр ăстасен ытарайми чӳлмек-кăкшăм эрешĕсем, тĕнчипе паллă чăваш тĕррине çав тери çывăх чаплă пăлхар тĕррисем урăх нихăш халăхра та çук хăй евĕрлĕхĕпе пирĕн кăмăла çĕклесе ячĕç. Кам пĕлет: тен, сав хĕрлĕ, хура, кăвак, сарă, симĕс тĕссене майлаштарса тунă «геометрилле» эрешсенче пирĕн халăхсен тупмалли юмах пек историйĕ пытанса пурăнать пулĕ...

Унччен кăшт кăна малтан эпĕ Таллинра эстон художникĕсен выставкинче пулсаттăм. Эстони халăх художникĕн Эвальд Окасăн «Париж» ятлă ярăмĕ асра юлчĕ. Хурапа кăна «типĕ йĕппелен» çырса укернĕ «Урамри художник», «Ташлакан негр хĕрĕ», «Париж турамăшĕн чиркĕвĕ», «Монмартрти художожник» — пысăк ăсталăхпа тунă, талантлă картинăсем. Чи йывăр шухăша яраканни «Абстракционист» картинă пулчĕ. - Художник хăй мольберчĕ умĕнче

тăрать. Карса хунă пирĕ çинче темле килĕшӳсĕр те арпашăнчăк йĕрсемпе таса мар пăнчăсем. Такам пылчăклă шăпăрпа çапса илнĕ, тейĕн. Чи хăрушши - художник пуçне пăрса сан çине тӳрех пăхни. Ун куçĕсенче çав вараланчăкшăн каçса каякансене курайманни те, хăй вĕсенчен нумай ăслăрах таланчĕшĕн трагеди пулса тăнă пурнăçран хăтăлайманни те лайăх палăрать. Художник хăйĕн ăсталăхĕпе нимĕне те ĕненми пулнă, ыйткалакан чунлă мещене йăпатса, хăйне хăй ирĕксĕрлесе пурăнать иккен.

Пирĕн совет искусствипе литературин сывă ӳчĕ çинче темле рак чирĕн мăкăлĕсем пек курăнаççĕхăш-пĕр «çĕнĕ çул шыратпăр» теекен суя талантлă космополитсен аппаланчăкĕсем.  Чăн телей халăх ăнланмалла, халăха кирлĕ искусствă тăвасси çавна ĕненсе ĕçлесси.

Чăваш журналистки Е. А. Орлова патне вăтăр çула яхăн ĕлĕкрех çырнă çырăвĕнче социализмла реализм никĕсне хывакан. Горький каланăччĕ:

«...Ĕнер пирĕн патран чаплă писатель, çав тери тӳрĕ кăмăллă çын чăн-чăн тусăмăр Ромэн Роллан кайрĕ тĕлĕнмелле çĕршывра ĕçлесси - мĕнле пысăк телей!» - терĕ вăл.

Эпĕ Сире, Орлова юлташ, сирĕн литераторсене Чăваш çĕршывĕнчи халăхăн кашни çыннине ирĕк ĕçпе пултарулăхăн аслă телейне тарăннăн, ĕмĕрлĕхех туйса илме сунатăп».

Çак ирĕк ĕç телейĕн туйăмĕ ман ăшра яланах пурăнатчĕ. Халăхшăн, революцишĕн, коммунизмшăн ĕçлес ирĕк вăл. Анчах пĕррехинче  Маяковский тăрăхланă ирĕк мар. Поэт такамăн ниçталлисĕр таçталли сăввине илсе  кăтартнăччĕ:  «Эпĕ - пролетари туппи, перетĕп унталла та, кунталла та.» Халĕ пурте пĕлеççĕ: «унталла» пеме тӳрĕ киличчен малтан «кунталла» та пайтах шаплаттарчĕç, хамăрăннисенех печĕç. Çынна «пĕчĕк винт» тесе час - часах кирлĕ мар çĕре пăрса кĕртнине курса тăракан лерисем хĕпĕртемен мар ĕнтĕ: пĕрне-пĕри ытларах пĕтерччĕр те, йăлтах

халран кайсан, эпир çитсе те çапăпăр! - тесе ĕмĕтленнĕ вĕсем. Кунта Бонапарт мĕлки хăшне-пĕрне çывăрма паман пулас.

Çынна эпир нуля хуратпăр,
Мăн хисепре пĕр хамăр çеç.
Эпир Наполеон пуласшăн,
Пин-пин этем вăл пирĕн чапшăн
Юравлă хатĕр çеç иккен,
Кулатпăр хĕрхенекентен...

Пушкинăн çакă чунне ыраттарса тухнă сăмахĕсем такамăн хăлхине ачашласа йăпатнă. Тен, такам вĕсене хăйĕн сивĕ кăмăллă «эпĕлĕхпе» «хамлăхне» тӳрре кăларма чĕрнипе шăйăрса е кăранташпа туртса паллă тунă пулĕ. Тепĕр тесен - Пушкинпа аппаланнă-и» вара вĕсем! 1938 çулта мана арестленĕ мăч та хупăнми кĕленче куçлă çын, поэтăн пĕр томĕнче эпĕ «Евгений Онегина» куçарнă чух паллă тунă тĕлсене курса, хамăн тетрадьсемпе пĕрле кĕнекене миххе чикрĕ те çавăрса çыхрĕ. Вара ăна вăл хампа пĕрле, пăшалпа сыхласа, «кирлĕ çĕре» кайрĕ. Çухалчĕ манăн нумай çул хушши калаçнă вĕрентекенĕм, ырă тусăм: пурне те çăтса тăнă ватă саспаллилле тĕпсĕр вар тавăрса памарĕ ăна каялла мана.

Поэтсемпе композиторсем одă çыратчĕç, гимн янрататчĕç... Саманан пытанчăк пружинĕсене курманскерсем, эпир ун чух та хамăр ирĕкпе çырнă, ĕненнĕ, тӳрĕ кăмăллă пулнă. Анчах вăхăт кăтартрĕ: «хамăр юррăн карланки çине таптаса» эпир хамăра пайтах çаратрăмăр...

Историн паянхи тӳпинчен каялла çаврăнса пăхсан, пуçа ирĕксĕрех çак шухăшсем кĕреççĕ.

Пур искусствăсемпе те пĕтĕм халăх интересленни, поэзи каçĕсенче вунă пин таран çын сăвă итлени, сăвă кĕнекисем çĕршер

пин тиражпа тухни - çакă пурте совет çыннисен культури ӳсse пынине кăтартать, литературăпа искусствă ĕçне халăх хăйĕн ĕçĕ йышăннине шантарать.

Нумаях та вăхăт иртмĕ - пĕтĕм Раççей çыравçисем иккĕмĕш хут хăйсен аслă пухуне пуçтарăнĕç. Çав нумай нациллĕ форум пĕр шухăшлă пулса, нимле тăшманла идеологипе те килĕшмесĕр ĕçлеме çул-йĕр палăртса хăварассăн туйăнать. Çĕршывăмăрăн утти-юртти çавнашкал, самана сывлăш тăрмăшĕ çаплалла, е ку енне, е леш енне, варрине тăрса юлма çук! Чăваш çĕршывĕнчи çыравçăсен ултăмĕш «черетлĕ пухăвĕ те, тĕп ыйтусенче пĕр кăмăллă пулса, ырри-усаллине уççăн палăртса, пур ӳсĕмри литераторсен пултарулăхне те тивĕçлипе тишкерсе тухрĕ.

Эпĕ хамăрăн поэзи çинчен шухăшлатăп. Хам та «çавна парăнса ĕçленипе, тен, тĕллĕн-тĕллĕн пусарах та алама тивĕ.

Кăçалхи «Ялавăн» иккĕмĕш номерĕнче А. М. Горький ячĕпе хисепленекен литературă институчĕн студенчĕ Аристарх Дмитриев çичĕ сăвă пичетленĕ: «Хĕрарăмсемпе салтаксем», «Каç урхамахĕ», «Аэлитă», «Эпĕ - çиле хирĕç», «Асăрханăр: ултавçă!», « Çырман çырусем», «Минут». Сăвă ячĕсене эпĕ юриех çырса илтĕм: вĕсем хăйсемех автор тĕрлĕрен темăпа çырма пăхнине кăтартаççĕ. Паллах, темă хăй тĕллĕн нимех те мар-ха. Мĕнле çырнă - хитре-и, витĕмлĕ-и, ĕненмелле-и, пĕр сăмахпа каласан - ăста-и? Çак енчен пăхсан та, ман шутпа, çамрăк сăвăçран пайтах интереслĕ япала кĕтме шанчăк пур пек туйăнать. Ку - çĕнĕ сасă, хăй евĕрлĕ çемĕ. Тĕрлĕ ритмпа пĕлсе усă курни, куçа курăнмалли е хăлха илтмелли конкретлă танлаштарусем, сăмах перекечĕ - ак мĕнпе уйрăлса тăраççĕ Дмитриев сăввисем ытти тĕссĕр-питсĕр кирпĕч пек тăватшар йĕркен купаланакан сăмах пуххинчен. (Яшсем çеç мар - тепĕр чух ятлă-сумлисемех купалаççĕ-çке çавна!) Чăн та, студентăмăрăн словарĕ чухăнтарах-ха: унта та кунта кирлĕ мар çĕртенех ют сăмахсем курăнкалаççĕ - «тростник», «значок»,

«коралл», «повестъ» сăмахпа халичченхи пин вырăс поэчĕ рифмăланă «совесть» тата ытти те. Пăхăсăн - çав ăнлавсене эпир тахçантанпах - ĕмĕр-ĕмĕрех тенĕ пек - тĕп чăваш сăмахĕсемпе палăртатпăр.

Сăмах майĕн каласассăн, çакнашкал çитменлĕхсем пайтах çамрăк сăвăçсен сăввисенче тĕл пулаççĕ. Акă, калăпăр, литературă институтĕнчех вĕренекен тепĕр студентăн - Юрий Петровăн - пĕр сăввинче кăна мĕн-мĕн çук: хайхи «тросник», «магнат», «факел», «континент», «романтик», «вива, Кубă» таранах. Чăвашла вулаканшăн ку пит кирлĕ-ши? Çитменнине Кубă çинчен вĕсемсĕрех чип-чипер çырма пулать пек пирĕн шутпа. Тата çав çĕршыва çиелтен кăна пĕлнĕ пирки автор тăтăшах «пурлăх, мул, романтикă çĕршывĕ», «ырлăхпа телей çĕршывĕ» тенĕ пек риторикăллă, ниме пĕлтермен кăшкăрусемпе кăна çырлахать. Сăввине «Тăван Атăлăн» пĕрремĕш номерĕнче «Лăпкă шуçăмсем кăна çутăлĕç» ятпа кăларнă. Альманахăмăр «Коммунизм ялавĕнче» хăнара пулнă кун эпир ăна хаçатра «Саламлать тĕнче» ятпа вуларăмăр, Тен, ăна сăвăç хăех улăштарнă пулĕ, тен, хаçат редакцийĕ витĕмлĕрех тума тăрăшнă-тăр, ытла «лăпкă шуçăмпе» килĕшмен-тĕр. Анчах альманахра та, хаçатра та çак йĕркесене сыхланă (ытарайман, курăнать):

> Пальмă та тростник, банан çĕршывĕ
> Пин те улт çĕр вак утрав çинче.

Кубă çинчен ку. Ытла йышлă мар-ши утравĕ? Паллах, автор çав çĕршыва темле урăх çĕршывпа пăтраштарать. Ку вара икĕ япалана пĕлтерет: географие хисеплемен сăвăçăн культурă шайне тата икĕ редакци те хăйсем алă пусса кăларнă сăвва асăрхамасăр вуланине.

Çамрăк сăвăçсем иккĕш те хăйсен чĕлхине пуянлатма кирлине, поэзи культурипе пĕрлех пĕтĕмĕшле культурине те ӳстерме тивĕçлине аван ăнланаççĕ, тесе шутлас килет. Сăвă ăсталăхне, куçпа хăлха тĕрĕслĕхне, хăйсен ĕненӳне çирĕплетме институт та, Шелепи

каларӗшле «темиҫене пăрăнăҫ» пурăнăҫ хăй те вӗрентессе шанас килет. Пушă риторикă, пӗр-пӗр пулăма иллюстрацилесе кăна кăтартни, литературăра ҫӳре-ҫӳре сăтăрăлса пӗтнӗ, штамплану сăмахсемпе усă курни, ытти писательсен сăнарӗсене кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртен аса илсе калаҫни - акă пирӗн поэзин тӗп инкекӗ. Пурнăҫри ӗҫсенчен юлас мар тесе, эпир хамăр поэзи ăсталăхӗн хăйевӗрлӗхне час-часах манса каятпăр, хаҫат чӗлхипе сăвăланă информацисем, заметкăсем ҫыратпăр. Публицистикăлла сăвăсем шухăшлă та сахал сăмахлă, тӳрех тӗл перекенскерсем пулмалла, формине те вӗсенне ҫӗнетсех тăмалла. Журналистсем хăйсен очеркӗсемпе, статйисенче уҫҫăн каласа панă япала ҫинчен тепӗр хут сивӗ тимӗрҫӗ пек сăвăҫăн такăнчăклă, аран утакан сăввисенче вулама кам хавас пулӗ-ши?

Андриян Николаев космонавт ҫинчен ҫырман чăваш поэчӗ юлмарӗ те пулӗ.  Эпир ҫав паттăрпа икӗ хут мухтанатпăр: вăл - пирӗн янташ тата совет ҫынни. Ун ҫинчен сăвă та, юрă та, поэмă та пичетлесе кăларчӗҫ. Ҫтихван Шавлы хăйӗн «Коммунизм ялавӗ» хаҫатра ҫаптарнă вăрăм сăввине поэмă тенӗ. Ман шутпа ҫав япала эпир риторикăпа иллюстраци тата литературă картинчен тухайманнине пит лайăх кăтартса парать. Самана паттăрӗн пурте пӗлекен биографине тепӗр хут каласа пани вулакана нимӗнпе те пуйтараймасть, Николаевăн мухтавлă ӗҫне ытти чаплă ҫынсен мухтавлă ӗҫӗпе танлаштарма хăтланни ахаль ҫырса кайнă список ҫеҫ пулса тухнă. Кам ячӗ ҫук унта! - Разин, Пугачев, Палатай, Яковлев, Охотников, Чапаев, Суворов, Бестужев, Бичурин, Колумб... Мӗнле ҫӗршыва, хулана, яла асăнман-ши?! - Конгă, Мали, Ганă, Кубă... Шупашкар, Кейӳ, Сӗнтӗрвăрри, Калугă, Одессă, Новосибирск, Кострома, Мелекес, Пекин, Пхеньян, София, Париж, Брюссель, Ҫӗрпӳ, Мускав,  Шуршăл тата (паллах!) Чулҫырма (автор ҫуралнă ял). Мӗнле шыв-шур юхмасть ҫав сăвăра! - Атăл, Днепр, Ҫавал, Сăр, Кинель, Сук, Ҫарăмсан, Сӗве, Йӗршшӳ... Темӗн чухлӗ пӗччен ҫăлтăра та, ҫăлтăр картине те асăннă.

Анчах асӑнса кӑна иртни, шутласа çеç тухни никама та, нихӑçан та поэзи тума пулӑшман-ха. Географипе космографи пӗлекен ятсене кирек мӗнле рифмӑласан та чуна тивекен сӑвӑ пулмасть-ха. Автор ытлашши хӑлаçланса картран вӗçерӗннӗ. Тӗп шӑнӑрӗ çук. Сасартӑк хыпса ӳксе (хавхаланса мар) васкавӑрла пур еннелле те сапаланнӑ шухӑш-туйӑм çути пӗр фокуса пуçтарӑнайман, тӗп темӑна çутатса парайман. Асра юлакан пӗр сӑнлӑх та, пӗр танлаштару та, пӗр деталь те çук. Литературӑри ятсене Пушкин, Лермонтов, Иванов, Çеçпӗл, Уйӑп Мишши таранах асӑнни, вӗсем çырнисене йӑлӑхтаричченех астутарса пыни - вырӑнсӑр. Темӑна лайӑх çавӑрса илме пулӑшмасть ку, вулакана аяккинелле пӑрса кӑна ярать.

Çав çиçӗмрен-аслатирен те
Нумай çӳлте халь Андриян.
Вӑл Демон пек вӗçсе çӳретӗр...
Халь ик çунатӑма эп сарӑп
Рублев ӳкернӗ пӳлӗх пек,
Эп çӑлтӑрсем патне хӑпарӑп
Сӑваплӑ музӑ пиллӗхпе.

Çакнашкал мифологилле-тӗшмӗшле сӑнарсем реализмла поэзире (ӑна темле романтикӑ çуначӗ парас тесен те) вырӑнсӑр. Ку поэтӑн хӑйӗн сасси мар, таçтан-такамран илтсе юлнӑ ют сасӑ. Христиан тӗнӗн турри вырӑнне автор Рублева халиччен никам ӳкерсе курман чӑваш пӳлӗхне тинкерттерет пулин те, картинӗ ӗненмелле мар, шупка, чӑн пурнӑçран инçе тӑрать.

Манӑн Шавлы пултарулӑхне пӗтӗмпех хуратса хурас кӑмӑлӑм пачах та çук. Эпӗ хамӑрӑн ӗçӗмӗрӗн йывӑрлӑхӗ çинчен калатӑп, çавӑнпа ятарласах актуаллӑ пӗр япалана тишкеретӗп. Ӑна авторӗ тӳрӗ кӑмӑлпах çырнӑ ӗнтӗ, эп ун пирки иккӗленмес анчах çырни ӑнӑçлӑ пулайман. Çав темӑна хускатма философилле тарӑн шухӑш, тен, хамӑрӑн пӗтӗм историе ӑнланса илни, ӑша хыптаракан лирикӑлла

хĕрӳлĕх кирлĕ. Ун урлă эпир çак саманара пурăнакан пур халăхсене те хамăр халăха, унăн хăй евĕрлĕхне, пĕтĕм этемлĕхпе çыхăннă ырă çынлăхне кăтартса пама тивĕç.

Ч ă в а ш. Çак сăмаха пĕлтĕрхи августăн пĕр эрнинче çырнă, каланă чухлĕ пĕтĕм истори тăршшĕнче те çырман, каламан пулĕ. Ӳстермесĕрех паллă: ăна тĕнчери пур чĕлхепе те асăннă. Халăх пурнăçĕнче çакнашкал кунсем пулаççĕ: пĕтĕм историйĕмĕр, ĕмĕрне-çухрăмне уямасăр, тарăн шухăшлă та хăватлă туйăм-сисĕмлĕ пĕр эпос пек чăмăртанса куç умне тухса тăрать. Эпир - поэтсем те, прозаиксем те - халлĕхе çавна çырса палăртаймарăмăр.

Юлашки çулсенче пирĕн хаçат-журналра совет литературинчи нацилĕхпе интернационаллăха епле шайлаштарса пымалли çинчен пайтах тавлашрĕç. Нацилле культурăсем, пĕр-пĕринпе хутшăнса, пĕрне-пĕри епле пуянлатса пыни çинчен кирлĕ сăмах хускатрĕç. Çапла та ыйтрĕç: пĕр-пĕр халăх писателĕн икĕ чĕлхеллĕ пулма тивĕçĕ пур-и, хăй чĕлхипе тата, калăпăр, вырăс чĕлхипе çырма пултарать-и вăл е пĕрне кăна юратмалла-и ун? Вырăс мар писатель вырăсла çырать пулсан, ăçта кĕреççĕ-ха унăн кĕнекисем - вырăс литературине е хăй халăхĕн литературине?... Çак ыйтусене хускатса Мускаври хаçат-журналра пичетленĕ А. Агаев, В. Солоухин, Н. Джусойты тата ытти юлташсен тавлашуллă статьисене вулакансем тĕрлĕрен ăнланса урлă-пирлĕ калаçкалани те пулчĕ. Ахед Агасв хăйĕн тезисне çирĕплетме пĕр статьинче ман хушамата та асăнать: «П. Хусанкай мĕн çырни йăлтах - чăвашли те, вырăсли те чăваш литературин пуянлăхне кĕрет», - тет («Литература и жизнь» хаçат, 1962 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕ).

Çак ыйтусем тăрăх хамăн шухăша каласа хăварас килет. Пĕррехинче эпĕ вырăс литературоведне парнеленĕ кĕнекем çине çакнашкал экспромт çырса парсаттăм:

Историпеле географи тăвасшăн

Мана ик чӗлхеллӗ поэт ку чухне.
Анчах ман чӗрем, ӑсӑм, чунӑм - чӑвашӑн,
Биограф юлташ! Эс ан ман ҫаксене.

Анчах ӗҫ ытла ансатах мар иккен. «Ик чӗлхеллӗ» пулассине хӑш-пӗр ҫынсем пӗтӗм нацилӗхе хирӗҫ наступлени пуҫланӑ пекех ӑнланни те пулчӗ. Вырӑс чӗлхи урлӑ вырӑс культурипе, пӗтӗм тӗнче культурипе паллашса-хутшӑнса пыни хӑш-пӗрин шухӑшӗпе халех наци чӗлхисене, наци хӑйевӗрлӗхне, нацисем хӑйсене хӑйсем хисеплессине пӗтерсе лартать пулать вара. Поэтсем уйрӑмах пӑшӑрханса ӳкни палӑрчӗ Яков Ухсай, тӑван чӗлхе шӑпипе ӑна ӗненмен чӑвашсем ҫинчен шухӑша кайса, «Кӑвак куппи» ятлӑ сӑввинче ҫапла ҫырать:

- Мана чӑваш поэтӗнчех хӑвар та
Пар ҫамрӑк ӗмӗр, - тейӗттӗм анчах...
Пуҫна чӗлхе вилессипе ан ҫӗмӗр,
Вӑл халӗ кирлӗ халӑха!
Мӗнле чӗлхе килет малашлӑха -
Ӑна кӑтартӗ тепӗр ҫутӑ ӗмӗр.

Дагестан халӑх поэчӗн Расул Гамзатовӑн «Тӑван чӗлхе» ятлӑ сӑввинче ҫав темӑ тата хурлӑхлӑрах кӗвӗленсе илтӗнет:

Такамшӑн сиплӗ ют чӗлхех, пӑхсассӑн,
Мана унпа пӳрмен кӗвӗлеме.
Тӑван чӗлхем ыран пӗтес пулсассӑн,
Эп хатӗр паянах ҫӗре кӗме.

Пирӗн ҫынсен психологийӗнчи наци хӳми чӑрмантаркалать-ха пире. Эпир ҫавна шута илмесӗр пултараймастпӑр. Халӑхсем пӗр-пӗринчен чӗлхепе ҫеҫ мар уйрӑлаҫҫӗ: вӗсен пурнӑҫ йӗрки те, йӑли-халамӗ те, кӑмӑлӗ те халлӗхе пӗр пекех мар-ха. Ку тӗлӗшпе парти Тутар обкомӗн пӗрремӗш секретарӗ Ф. Табеев иртнӗ ҫул «Литературная газетӑра» Сапантуй уявне хӳтӗлени кӑтартуллӑ пулса

тăрать. Пĕр çынна турă вырăнне хисепленĕ вăхăтра, ыгги-сĕр пуçне, нацисен кăмăлне хуçса кӳрентерни те пулнă. «Мĕнле чăваш культури пулма пултарать?! Совет культури пур!» - тетчĕç пире тепĕр чух çӳле хăпартса лартнă демагогсем. Чăвашсем совет çыннисем мар-шим вара? «Чăваш çынни» тесе çырнине хăш-пĕр ăслăпуç редактор, нумай шухăшласа тăмасăр, «ĕç çынни» сăмахпа улăштаратчĕ. Чăваш ĕмĕрне те ĕçлемен, тейĕн çав!

Унашкал «шиклĕ шикленнĕ - кĕрĕкне пĕркеннĕ» тенĕ пек хăш-пĕр хăравçăсен каялла çаврăнса пăхасси, «тем курса тăрăн!» тесе сехĕрленесси халь те пĕтсех пĕтмен-ха. Ку тĕлĕшпе кулăшла, анекдотла япаласем те пулкаларĕç. Акă, сăмахран, пĕр тĕслĕх. (Хушаматне те, адресне те пĕлетпĕр). Пурăнать этем, службă чикмекĕн картлашкипе çĕкленсе чылай çӳле хăпарать, «пысăк слущи тет хăйне». Тĕнчене çуратса янă чăваш ашшĕ-амăшĕнчен тахçанах уйăрăлнăскер, хăй çăкăрне çиекенскер, чăваш ятĕнчен йĕрĕне пуçлать. Пĕринче вăл çар билетне тĕрĕсленĕ вăхăтра комиссариата пырать те татăклăн калать: «Чăваш тесе çырнине в ы р ă с сăмахпа улăштарăр, - тет. «Анчах эсир чăваш-çке! - тет ăна вырăс çынни, - ма вара тарăхсах хăвăр халăхăртан писетĕр? Аван-ши ку?» - «Имею право, - тет ăсĕпе район калăпăшĕнчен тухайман философ Ф. Павлов комедийĕнчи Катăк Çăвар пек, - я слопотнăй краштанин!»

Сасартăк... Андриян Николаев тĕнче уçлăхне вĕçсе хăпарать. Унăн анкети пĕтĕм тĕнчене паллă пулса тăрать: «Вăл - чăваш» тенĕ унта. Лăпкăн каланă. Тĕрĕссипе - Виççĕмĕш Космонавт анкетине çырнă чух хăй мĕнле халăх çынни пирки ятарласа шухăшламан та пулĕ. Тăван çĕршывпа аннене суйласа илме çук-çке. Кунта вара хайхи «слопотнăй краштанин» аптăранă кăвакал пек кутăн чăма пуçланă. Сывлăшне çавăраймасăр, хашка-хашка вăл ракетăран та хăвăртрах çар комиссариатне вĕçтернĕ: «Тĕрĕс каларăр... аван мар... ăнлантăм... паллах. Эпĕ - чăваш».

Чăваш халăхне çутта кăларакан аслă И. Я. Яковлев, В. И. Ленин калашле «чăвашсене наци тĕлĕшĕнчен çĕклесшĕн аллă çул ĕçленĕскер», хăй кун-çулĕнче пайтах хура-шур курнăскер, çакнашкал мĕскĕн чунлă, çил хӳри пек çынсем çинчен çапла каланă:

«Ниме тăман пĕтнĕ çынсем хăйсен тăван халăхне мĕскĕне хума хатĕр, унран уйрăлса кайма пăхаççĕ. Вĕсем ют мухтав çумне çыпçăнасшăн, аслă шутланакан халăх чапне çулăхасшăн. Ун пек çынсенчен тăванĕсем те пăрăнаççĕ, ютсем те вĕсене йышăнмаççĕ. Вăйлă çынсем тăван халăхне чапа кăларасшăн, ăна аслă халăх тăвасшăн кĕрешеççĕ. Вĕсем çакна ăнланаççĕ: хăвăнта пархатар çук пулсан, наци пархатарĕпе ырă ятлă пулаймăн».

Халăхсен историллĕ шăпи тĕрлĕ килсе тухать. Пĕтĕм этемлĕх культурин ылтăн-кĕмĕл çӳпçине кашни халăх хăй хăватне кура мул хывать. Анчах çак иккĕленӳсĕр паллă: пĕр-пĕр халăхăн ĕлĕк-авалтан пыракан нацилле хăйевĕрлĕхĕ çеç этемлĕхĕн пĕрлехи - интернационаллă - ăс-хакăлĕпе ăсталăхне пуйтарма пултарать. Çакă малтан хирĕçлевлĕ пек туйăнакан шухăшăн хăйĕн диалектики пур. Ăна пĕтĕм тĕнче культурин аталанăвĕ чăнласа кăтартать. Гомерпа Данте, Руставелипе Навои, Низамипе Саади, Шекспирпа Сервантес, Пушкинпа Шевченко - ма çак ятсем пуриншĕн те хаклă-ха? Ма тесессĕн кашни хăй халăхне çĕклекен пысăк пулăм пек çитнĕ вĕсем ку тарана, кашни хăй халăхĕн мухтавĕ пулнă.

Пысăк поэт хăйне çуратнă халăх историйĕн тулашĕнче тăма пултараймасть: иртни çинчен поэмă çырать-и вăл е юрату сонечĕ кĕвĕлет - çавах. Анчах пирĕн самана, нацин тăвăр картинчен тухса, анлăраххăн ярса пусма хушать пире. Раççейĕн чи ăслă çыннисем - вырăссем те, вырăс маррисем те -ĕлĕкренех çав тăвăр картаран тухас ĕмĕтпе пурăннă, ĕçленĕ, кĕрешнĕ. Халĕ пирĕн халăхсем пĕрне-пĕри хисеплеççĕ, пĕр-пĕрин культурине тĕплĕн вĕренсе ăша илсе пыраççĕ,

кашни халăхăн историллĕ шăпине чĕререн ăнланма тăрăшаççĕ, малашне пурне те пĕрлештермелли йăла-йĕркене тинкререх параççĕ.

Халăхсен культурисем пĕр-пĕринпе нихçанхинчен те тачă хутшăннă вăхăтра, «наци тасалăхĕшĕн» тăрăшам пек туса, истори çӳп-çапĕ çинче чаваланакан пурист е, чăн пурнăç мехелне уямасăр, ашшĕ-амăшне палламасăр, ракетă хăвăртлăхĕпе пиншер çул малалла ыткăнакан национал-нигилист - мĕнле мĕскĕнĕн курăнаççĕ халĕ вĕсем! Пĕр медалĕн икĕ енĕ, тенĕ пек, унашкал вĕçкĕн шухăшлă каппайчăксем иккĕш те пĕрех-çке. Вĕри чир çунатлантарнă суя фантази те, демагогла сивĕ, чее хăтлану та - пирĕн социализмла пурнăçăн объективлă йĕркисемпе килĕшме пултарайман япаласем.

Габдулла Тукай тутарпа Константин Иванов чăваш çур ĕмĕр ытла ĕлĕкрехех çав икĕ йышши каппайчăка та тивĕçлипе питлесе тăкнă. Поэтăмăрсем иккĕш пĕр çултах (1908), халăхăмăрсен шăпишĕн чунтан-вартан пăшăрханса, хăйсен програмлă сăввисене çырнă. Эпĕ Тукайăн «Националистсем» сăввипе Ивановăн «Хальхи самана» сăвви çинчен ка-латăп.

Раççейри пĕрремĕш революци çĕнтерейменни кашни халăхрах социаллă сийсене хирĕçтерсе янă. Либераллă буржуазипе унăн юрăçисем, малтан пăл-хав çĕкленĕ халăх майлăрах юрланăскерсем, часах улшăннă - патша йĕркин сатрапĕсем майлă çаврăнса ӳкнĕ.

Кăлăхах çав! Сăр хуртран эс ан кĕт ырлăх:

Сутăнми, хăватлă чунлă паттăр кирлĕ! - тенĕ асăннă сăввинче Тукай. Иванов çав ĕçлемесĕр пыл кӳпнĕ «сăр хуртсене» хăй халăхĕн ренегачĕсене çапла питленĕ:

Анчах чăваш хушшинче  
Чунĕ хытнă çынсем те  
Тапалана пуçларĕç,  
Тăрса çапла каларĕç;  
«Чаплă вырăн тупасчĕ,

Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳмешĕн
Тĕнки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть,
Чĕри шăнса кайнă çав,
Чĕрĕ виле пулнă çав.

Çапла ĕнтĕ, икĕ фронтра çапăçнă пек, национализмпа та, национал-нигилизмпа та пĕр танах кĕрешсе, Тукайпа Иванов чăн-чăн халăх литератури тума тăрăшнă. Эпир, пур «измсенчен» чи пахине коммунизма - чунпа-чĕрепе йышăннăскерсем, çакна туятпăр: гуманизмпа ирĕклĕх рыцарĕсем - пирĕн аслă халăх поэчĕсем паян пирĕнпе пĕр урам утаççĕ. Эпир Ивановăн вилĕмсĕр сăмахĕсене илтсе хавхаланатпăр:

Çакă çумă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен.

Эпир Тукайăн йыхравлă, уçă сассине илтетпĕр: «Сывă пултăр халăх литератури! Сывă пултăр тăван чĕлхе! Телейлĕ çул!»

Литературă ĕçĕ - чи йывăр ĕç. Кашни сăвă - пĕчĕк те пулин асамлă хăват, тĕнчене çĕнĕлле уçса» кăтартни. Кашниех мар пулсан - çавăн пек пулмалла вăл! Пурте пĕлекен чăнлăха кивелсе-якалса. пĕтнĕ сăмахсемпе каласа парасси - ансат ĕç. Цитатăсем суйласа кĕртсе лартасси - тата ансатрах. Ун чухне чĕре таппи те хăвăртланмасть, ăшчик те çунмасть. Эпир тесен - ĕмĕрех хыпса çунса пурăнатпăр. «Кăвар чĕре!» - акă поэтăн Çеçпĕл ячĕ. Уншăн пулсан - хĕрӳллĕ поэзи, тăван сăмах: халăха малалла ямалли пысăк хăват.

Патшалăх ĕçне, обществăпа политикă пурнăçне пĕтĕм культурă юхăмне тăван чĕлхе витĕр витмесĕр, ман шутпа, халь те пирĕн нацин Çеçпĕл ĕмĕтленнĕ Чĕрĕлĕхĕ тивĕçлипе пулса пыма пултараймасть. Тăван çĕршывсăр интернационалист, тымарсăр, темле абстрактлă

патриот пуличчен - пулманни паха. Ман патриотимлăхăм хам çуралнă пӳрт умĕнче ӳсекен йăмраран пуçланать, ваттисем выртакан масар тăпринчен тапранать, тăван букварьти тăван сăмахран, уяв юрринчен, хантăсла тĕрĕрен акатуй вăййинчен, ырă кăмăллă ĕçчен Улăпран ӳссе аталаннă. Çакăн пек вăйлă тымар пуртан çеç манăн патриотлăхăм мана Раççейри Чăваш Çĕршывĕпе, Совет Союзĕнчи Раççейпе, социализм лагерĕнчи! Совет Союзĕпе мухтанма тивĕç парать. Çакна ăнланни аслă ĕçчен çын А. М. Горький асăннă «ирĕк ĕçпе пултарулăхăн аслă телейне» кӳрет ĕнтĕ мана.

Tăван Atăл. - 1963. - № 3. - С. 70-74.